Ĕçпе тивĕçтерессин ыйтăвĕсемпе

# Ытларахăшĕ хăйне ĕçре туптарĕ

Ĕççĕррисене обществăлла ĕççене явăçтарни вĕсене ĕçпе тивĕçтермелли тухăçлă мелсенчен пĕри пулса тăрать. Практика çакна кăтартса парать: обществăлла ĕççене йĕркеленĕ май гражданссене адреслă пулăшу пама май пур.

Çынсене ĕçпе тивĕçтерекен центр кăçалхи 9 уйăхра ĕççĕррисене физкультурăпа спорта аталантарас, Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравне ирттерес, сезонри ял хуçалăх ĕçĕсене туса ирттерес, территорисене тирпей-илем кĕртес ĕççене тата ытти мероприятисене активлă хутшăнтарнă. Çак тапхăрта предприятисемпе тата организацисемпе вăхăтлăх хушма ĕç вырăнĕсем йĕркелеме 20 килĕшӳ тунă. Йӳçкасси, Юнкă, Чуманкасси шкулĕсем, район администрацийĕ, район прокуратури, районти çар комиссариачĕ, шалти ĕççен пайĕ, «Моргаушский» пасар, «Свобода» хуçалăх, Мăн Сĕнтĕр райповĕ обществăлла ĕççене йĕркелессипе ĕçпе тивĕçтерекен центрăн яланхи партнерĕсем пулса тăраççĕ.



Отчетлă тапхăрта обществăлла ĕççене 103 ĕççĕр çынна хутшăнтарнă. Ку енĕпе плана 101 процент пурнăçланă. Вĕсем ĕç тăвакансем, хушма ĕç рабочийĕсем, машинисткăсем пулса вăй хунă. Çапла вара ĕçе вырнаçассине кăна сыхласа хăварнă мар, укçа-тенкĕ те ĕçлесе илнĕ. Обществăлла ĕççене хутшăннин вăтам кăтартăвĕ 0,35 уйăхпа танлашнă.

Обществăлла ĕççене йĕркелеме 2006 çулта федераллă бюджетран 57100 тенкĕ, ĕç паракансенчен 6742,12 тенкĕ уйăрнă. Районĕпе обществăлла ĕççене хутшăнакан кашни çын вăтамран уйăхне 619 тенкĕ те 83 пус ĕçлесе илнĕ.

Кунпа пĕрлех çуллахи каникул кунĕсенче çул çитмен çамрăксене ĕçпе тивĕçтересси çине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Ку ĕççене 14-18 çулсенчи яшсемпе хĕрсем хутшăнаççĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа кăçал çул çитмен çамрăксене ĕçе вырнаçтарма 18 килĕшӳ тунă. Вĕсемпе килĕшӳллĕн 14-18 çулсенчи çул çитмен 565 çамрăка ĕç тупса панă. Чи малтанах çул çитмен 7 çамрăка Юнкă шкулне, 16 çамрăка Йӳçкасси шкулне янă. Çамрăксем вĕренӳрен пушаннă вăхăтра шкула юсассипе тата тирпей-илем кĕртессипе ĕçленĕ. Аслисене стенасене тасатма, обойсем çыпăçтарма, маччасене шуратма, парттăсемпе стенасене сăрлама пулăшнă.

Çулленех шкулсем пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе килĕшӳсем тăваççĕ. Ачасем хуçалăхсен уй-хирĕсенче пахча çимĕç тата тымар çимĕç культурисем пăхса ӳстереççĕ. Ку вара ачасемшĕн меллĕ. Пĕр енчен, шкула пулăшма май пур, тепĕр енчен, хăйсене валли укçа-тенкĕ ĕçлесе илеççĕ.

Çĕнтерӳ кунне уявлама хатĕрленнĕ май апрель уйăхĕнче социаллă пулăшу управленийĕпе килĕшсе çул çитмен 30 çамрăка çĕнтерӳçĕ-салтака халалласа лартнă палăк тавра тирпей-илем кĕртес ĕççене явăçтарнă. Иртнĕ çул çул çитмен çамрăксене вăхăтлăх ĕçе явăçтарас тĕллевпе вакансисен 2 ярмăркине ирттернĕ. Ĕçпе тивĕçтерекенсем 327 ĕç вырăнĕ тупса панă. Шкулсенче çул çитмен çамрăксен 8 бригадине йĕркеленĕ. Вĕсем юсав ĕçĕсем пурнăçлассипе япăх мар ĕçленĕ.



Пĕтĕмĕшле илсен, ĕççем сахал мар пурнăçланă. Çул çитмен çамрăксене ĕçпе тивĕçтерме укçа-тенкĕне федераллă тата вырăнти бюджетран уйăрса параççĕ. Ку тĕллевпе çынсене ĕçпе тивĕçтерекен районти центр 204300 тенкĕ, çав шутран 18930 тенкĕ федераллă бюджетран тăкакланă. Вырăнти бюджетран вара 15 пин тенкĕпе усă курнă.

Çамрăксен ĕç бригадисем çак енсемпе ĕçленĕ:

– уй-хир ĕçĕсем;

– лесничество;

– юсавпа строительство ĕçĕсем;

– нумай функциллĕ бригадăсем.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем база хуçалăхĕсемпе килĕшӳсем туса купăста, кишĕр, çĕр улми, кăшман лартса çитĕнтерессипе, утă пухса кĕртессипе, чăхсене пĕр ушкăнран тепĕр ушкăна куçарассипе ĕçленĕ. Кунпа пĕрлех çул çитмен çамрăксен пур бригадисем те хăйсене çирĕплетсе панă çĕр участокĕсенче ĕçленĕ, чечексем акса ӳстернĕ, шкулсен территорийĕсене тирпей-илем кĕртнĕ, классенче юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ.

Кашни бригадăн хăйĕн ĕç планĕ пур. Унта ĕçпе канăва шайлашуллă пăхса хунă. «Зарница», «Орленок» çарпа спорт вăййисене, шкултан вĕренсе тухакансен каçне, çара кайма хатĕрленекенсен спартакиадине, турист çул çӳревĕсене, Нептун кунне, Шупашкара тата Атăл çине экскурсисем йĕркелессине те палăртнă.

Çул çитмен çамрăксен ĕçпе кану лагерĕсене халалласа кăçалхи июнĕн 17-мĕшĕнче йăлана кĕнĕ 2-мĕш район спартакиадине ирттертĕмĕр. Вăл Муркаш шкулĕн стадионĕнче иртрĕ. Çивĕч кĕрешӳре 9 конкурс итогĕсем тăрăх 1-мĕш вырăна Муркаш шкулĕ çĕнсе илме пултарчĕ, 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене Оринин тата Нискасси шкулĕсем тивĕçрĕç.

Ĕç чĕрĕкĕн итогĕсемпе çул çитмен çамрăксен ĕç бригадисем хушшинче конкурс ирттерме палăртнăччĕ. Унăн итогĕсем çапла: 1-мĕш вырăнта Шурча шкулĕнчи «Экрем» бригада, 2-мĕшĕнче Оринин шкулĕнчи «Спартанцы» бригада тата 3-мĕш вырăнта Калайкасси шкулĕнчи «Пирамида».

Призерсемпе çĕнтерӳçĕсене пурне те район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн парнисемпе дипломĕсене парса хавхалантарнă.

**Т. АНТОНОВА, çынсене ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи.**

Эсир пĕлесшĕнччĕ

# Çăмăллăхсемсĕр ан юлăр

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**– Çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн субсиди парасси уксахламасть-и тата?**

– Паянхи куна ку çăмăллăха 2417,5 пин тенкĕлĕх илнĕ районта пурăнакансем. Кунта та çавнах калас килет. Субсидие илме кирлĕ документсене хатĕрлеме ӳркенмелле мар. Тивĕçекен çăмăллăха илмесĕр юлни кӳренмелле вĕт-ха.

Палăртмалла, çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тивĕçекен субсидие вара юлашки 6 уйăхри ĕç укçине (пенсионерсен юлашки 6 уйăхри пенси укçине, вĕсен çавăн пекех çăмăллăхпа усă курма ирĕк паракан удостоверени копийĕ кирлĕ пулать), çемьене килекен пур тупăша та шута илеççĕ. Документсем пуçтарса пĕтермеллескерсемех: халь çеç асăннă справкăсăр пуçне хваттерсенче пурăнакансен çурт кĕнекинчен çырса илни (ялта пурăнакансен – хуçалăх кĕнекинчен çырса илни, малтанхи хут килекенсен хутса ăшăтакан лаптăк пирки БТИ справки), ĕçлекенсен ĕç кĕнекин копийĕ, ИНН, паспортпа ачасем çурални çинчен калакан свидетельствосен копийĕсем, çут çанталăк газĕпе, электроэнергипе усă курнăшăн çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳленине çирĕплетекен документ (ялта пурăнакансен шывпа усă курнăшăн тӳленине çирĕплетекен хут. Хытă топливо е баллонри газ илнине çирĕплетекен накладнойпа квитанци), субсиди илекенĕн перекет кĕнеки тата скоросшиватель кирлĕ пулать.

Субсидие ку уйăхшăн илес тесен, 15-мĕш числоччен тăратмалла документсене. Вĕсене 15-мĕш число хыççăн тăратнисене вара субсидие тепĕр уйăхран пуçласа çеç пама пуçлаççĕ. Ку ыйтупа район администрацийĕн 123-мĕш пӳлĕмне пымалла.

**– Уйрăм категорине кĕрекенсем федераллă тата регион шайĕнчи çăмăллăхсемпе усă кураççĕ. Вĕсен хушшинче çăмăллăхсемпе усă курманнисем çук пулĕ-ха.**

– Ку тĕлĕшпе те çапла татса калама çук çав-ха. Мĕншĕн çапла калатăп-ха. Пурĕ 6550 çыннăн çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пулăшăвĕсене илме право пур. Вĕсенчен 3391шĕ федераллă, 3159шĕ регионти çăмăллăхсене илсе тăракансем. Çав федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансенчен инвалидсем пурĕ 2276. Анчах та çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемпе усă курнăшăн паракан çăмăллăхпа вĕсенчен 1494шĕ çеç илеççĕ. Ыттисем унпа усă курмаççĕ. Çавăнпа та вĕсене ку ыйтупа пирĕн пата е коммуналлă пулăшу паракан предприятисене килме чĕнсе калас килет.

“РФ инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен” федераллă саккунпа килĕшӳллĕн 1,2,3 степень инвалидсене, инвалид ача пур çемьесене электроэнергипе усă курнăшăн паракан çăмăллăха шутланă чух çемьери çак çăмăллăха тивĕçнĕ çын электроэнергипе мĕн чухлĕ усă курнине шута илсе параççĕ. Çавăнпа та çак çăмăллăха илес тесен, энергосбыта çемьере миçе çын иккенне кăтартакан справкăпа инвалид пулнине çирĕплетекен МСЭ справкине тăратмалла. Çумра паспорт, элктроэнергипе усă курнăшăн тӳлемелли кĕнеке пулмалла.

Тата çакна ыйтсах каласшăн. Социаллă хӳтлĕх пайĕ коммуналлă пулăшусемшĕн кашни уйăхăн 30-мĕш числиччен тӳлеме ыйтать. Унсăрăн çăмăллăха паракан организацисем тӳлемен уйăхшăн çăмăллăха шутласа параймаççĕ.

**– Тавах, Нина Пантелеевна, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Спорт

# Волейболла выляссипе

Ноябрĕн 7-8-мĕшĕсенче, Муркашри Спорт çуртĕнче, Муркаш шкулĕнче тата вĕрентӳпе культура тата сиплев центрĕн спортзалĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсенче вĕренекенсем хушшинче районта мала тухассишĕн баскетболла выляссипе ăмăртусем иртеççĕ. 10 сехетре пуçланаççĕ.

Командăра 9 участник тата 1 представитель пулмалла. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче яшсем, ноябрĕн 8-мĕшĕнче хĕрсем вăй виçеççĕ.

Мала тухнă командăсем дипломсемпе куçса çӳрекен кубоксене илме тивĕç пулаççĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăн йышăннă командăсем дипломсене тивĕçеççĕ. Лайăх вылякансене те Хисеп грамотисем пама пăхнă.


Пĕлтерӳсем. Объявления




**Организация реализует ГСМ. Возможна доставка ж/д и а/транспортом.**
**Гибкая система скидок.**
**Тел.: (8422)95-94-67, факс: (8422)38-46-24.** 2-4.

**Требуются рабочие в мебельный цех.**
**Тел.: 8-906-386-77-37, 8-905-343-08-23, 2-13-05 после 20-00 ч.** 2-3.

**Куплю сено, солому.**
**Тел.: 8-927-845-76-49.** 2-3.

**Куплю или сниму однокомнатную квартиру в с. Моргауши.**
**Тел.: 8-905-028-08-17.**

**Продается ВАЗ-21063, 1990 г. в., двиг. 1300, цвет белый. Цена 15 тыс. руб. Продаю керамблоки, жерди. д. Москакасы.**
**Тел.: 8-927-845-42-59.**

**Продается а/м Газ-330230. Фермер – А-76 + газовое оборудование. Цена договорная.**
**Тел.: 8-906-381-25-10.**

**Парикмахерская, расположенная в здании ОАО «Моргаушавтотехсервис» (сельхозтехника), предоставляет следующие услуги: хим. завивка (щадящий), покраска бровей и ресниц, выщипывание бровей, вечерние и свадебные прически, модельные стрижки, покраска волос (краски в наличии имеются).**
**Тел.: 2-19-38, 8-906-134-16-76.**





**Хаçатăн çитес номерĕ ноябрĕн 11-мĕшĕнче тухать.**


ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3364.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 02.11.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.